# ĔÇЧЕН МУЧИ

ЭПИР чăвашсен паллă писателĕ Иван Иванович Илларионов - Иван Мучи çырнă кулăшла калавсене вуласа, итлесе мĕн чухлĕ савăнман пулĕ.

Унпа 1936 çулта «Капкăн» журнал редакцийĕнче паллашма тӳр килчĕ. Эпĕ патвар, питех те шухăшласа калаçакан, хура çӳçне пуç урлă янă, тĕрĕллĕ кĕпе тăхăннă Иван Мучи умĕнче ларатăп.

- Эсĕ çырнă «Çĕнĕ çул кĕрекинче» ятлă пĕчĕк калава вуласа тухрăм. Ăна «Капкăн» журналта пичетлеймерĕмĕр. Мĕншĕн тесен унта ăшă кулă, шӳтлесе калани çитсех каймасть. Пире, ху та пĕлетĕн, сатирăллă япаласем кирлĕ, - терĕ Иван Иванович. Çавăнтах вăл мана «Капкăн» журнал валли материалсем çырнă чух мĕн-мĕн асра тытмалли çинчен ырă канашсем пачĕ.

Пĕррехинче Иван Иванович чĕннипе эпĕ «Капкăн» редакцине кайрăм. Редакци пӳлĕмне Пичет çуртĕнче ĕçлекен çамрăксем пухăннă.

- Эпир, Шупашкарти журналистсем, Ишлей районĕнчи ялсене шефа илтĕмĕр. Пирĕн вĕсене культурăллă-массăллă ĕçре пулăшса пымалла. Малтанласа ял ĕçченĕсене спектакль лартса парас кăмăл пур. Эсир кун пирки мĕн шутлатăр? - терĕ пире Иван Иванович. Çамрăксем пурте ун шухăшне ырларĕç.

Хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. Кашни кунах «Капкăн» редакцине репетицине пухăнаттăмăр. Иван Мучи - спектакль режиссерĕ. Эпир - пьесăра выляканссем. Ун чухне Иван Мучи театр ĕçне лайăх пĕлни пире пурне те тĕлĕнтерчĕ. Нихăçан та манас çук ман пĕр пьесăри /халĕ пьеса ятне те, ун авторне те астумастăп/ тĕп роле, каччă рольне вылямалла пулчĕ. Хĕр рольне вара Пичет çуртĕнче ĕçлекен Ира Эсхель вылярĕ. Пирĕн спектакльте пĕр-пĕрне чун-чĕререн юратнине кăтартса памалла.

Паллах, иксĕмĕр те вăтанатпăр, пĕр-пĕрин патне пырса тăма та хăю çитерейместпĕр. Ун пек чух Иван Мучи пире иксĕмĕре алăран çавăтатчĕ те: «Ну, пĕр-пĕрин çине ăшшăн, кăмăллăн пăхса илĕр-ха. Пурнăçри пек, чун-чĕрере юрату çунса тăни палăртăр», - тетчĕ. Пьеса хатĕрлесе çитерсен Варпуçне спектакль лартма, концерт кăтартма кайрăмăр.

Лайăх астăватăп: Иван Мучи ертсе кайнă çамрăксем хушшинче Аркадий Эсхель, Максим Ястран, Иван Малгай поэтсем, Степан Иванов журналист пурччĕ. Спектакль-концерт умĕн Иван Мучи сăмах каларĕ. Вăл «Ял ĕçченĕсемпе журналистсем, писательсем хушшинчи туслăх çирĕпленсе пыни пире пурне те савăнтарать», - терĕ.

Унтан вăл ял ĕçченĕсене хăйĕн кĕске калавĕсемпе тăраничченех култарчĕ. Поэтсем çĕнĕ сăввисене янраттарчĕç.

Спектакле те куракансем лайăх йышăнчĕç. Çак туслă тĕл пулу вĕçленсен Иван Мучи пире пĕтĕм чун-чĕререн тав турĕ. «Пултаратăр эсир, çамрăк тусăмсем. Паянхи каçра мĕн чул ăшă кулă, мĕн чул савăнăç пулчĕ. Пичет çуртĕнчен Варпуçне уçнă çула такăрлатсах тăрар», - терĕ вăл.

1946 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕнче республикăри культура çыннисем Советсен çуртне пухăнчĕç. Кунта Чăваш АССР 25 çул тултарнă ятпа литературăпа искусство, историпе чĕлхе енĕпе ирттернĕ конкурсра мала тухнă произведенисен авторĕсене премисем пачĕç. Ун чухне эпĕ те «Çемен» поэмăшăн виççĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пултăм. Çавна май мана та тус-юлташсем чун-чĕререн ырлăх-сывлăх сунса саламларĕç. Иван Мучи аллăма хытă чăмăртарĕ те: «Эпĕ çамрăксем ӳссе, вăй илсе пынишĕн савăнатăп», - терĕ.

Çав кунах, каçхине йышăну пулчĕ. Кĕрекере Иван Мучи тус-юлташĕсемпе питех те ăшшăн, савăнăçлăн калаçсаларни халĕ те куçăм умĕнче тăрать...

Ку вăл пирĕн юлашки тĕл пулу пулчĕ. Тепĕр кунне, апрелĕн 28-мĕшĕнче ирхине, Иван Иванович Илларионов - Иван Мучи ăнсăртран вилни çинчен пĕлтĕмĕр. Çав тери йывăр хыпар. Усал вилĕм пиртен çывăх тусăмăра, пысăк писатель - сатирике уйăрса кайрĕ. Анчах та Иван Мучин ырă сăнарĕ, ĕçĕ-хĕлĕ тăван халăхăмăр асĕнче çутă çăлтăр пек ялкăшса тăрать.

**Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ,**
**Чăваш халăх поэчĕ.**